27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлĕшĕр!

1945
МАРТ
13
ЫТЛАРИКУН
48(1799) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА
СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне **РОКОССОВСКИЕ**
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-полковника **БОГОЛЮБОВА**

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, нимĕçсен ДАНЦИГПА ГДЫНЯ хулисем патнелле пымалли çулсем çинчи оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсене—ТЧЕВ (ДИРШАУ) хулипе ВЕЙХАРОВО (НОЙШТАДТ) хулине туртса илнĕ те, Гдыня хулинчен çурçĕр терехре Данциг бухти хĕррине тухса, ПУЦК (ПУТЦИГ) хулине йышăннă.

ТЧЕВ, ВЕЙХАРОВО тата ПУЦК хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: РОМАНОВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-полковникăн, ЛЯПИН генерал-лейтенантăн, КОКОРЕВ генерал-лейтенантăн, КОРОТКОВ генерал-майорăн, ПОЛЕНОВ генерал-лейтенантăн, МИКУЛЬСКИЙ генерал-лейтенантăн, ХУДАЛОВ генерал-майорăн, АСАФЬЕВ полковникăн, КОРШУНОВ полковникăн, ПОЛУВЕШКИН полковникăн, ГРЕБЕНКИН полковникăн, ХРАМЦОВ полковникăн, КУРЕНЬ полковникăн, ЛЯЩЕНКО генерал-майорăн, РАДЫГИН генерал-майорăн, БОРЩЕВ генерал-майорăн, ДМИТРИЕВ генерал-майорăн, ИГНАТЬЕВ генерал-майорăн çарĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ПАНФИЛОВĂН, ДРЕМОВ генерал-майорăн, БАБАДЖАНЯН полковникăн, МАЛЮТИН полковникăн, УРВАНОВ полковникăн, ЕГОРОВ подполковникăн, КУЦ подполковникăн, РЯЗАНЦЕВ подполковникăн, НЕМКОВИЧ подполковникăн, ХАРИТОНОВ полковникăн, АНТИПОВ полковникăн, КОРЖЕВСКИЙ подполковникăн, ЖАБИН майорăн, БАЛЫКОВ подполковникăн танкисчĕсем; артиллери генерал-майорĕн БЕЗРУКĂН, артиллери генерал-майорĕн КАЗАКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн КОЗНОВĂН, артиллери генерал-майорĕн РОГОЗИНĂН, артиллери генерал-майорĕн МАЛОФЕЕВĂН, АЛФЕРОВ полковникăн, КАТУНИН полковникăн, ГЕРАСИМЕНКО полковникăн, КИРГЕТОВ полковникăн, БЕЛЯКОВ полковникăн, ЗЕРНОВ подполковникăн, АХТЫРЧЕНКО подполковникăн, ГНИДИН полковникăн, МУРИНОВ подполковникăн, АНАНИЧ подполковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ВЕРШИНИНĂН, авиаци генерал-майорĕн АЛЕКСЕЕВĂН, авиаци генерал-майорĕн БОРИСЕНКĂН, авиаци генерал-майорĕн ГЕТЬМАНĂН, ОСИПОВ полковникăн, ТИХОМИРОВ полковникăн, СМОЛОВИК полковникăн, ВУСС полковникăн, ВОЛКОВ полковникăн летчикĕсем; НЕМИРОВСКИЙ полковникăн, КЛЕМЕНТЬЕВ полковникăн, ПЕТРОВ подполковникăн, ПОЛОВНЕВ инженер-полковникăн, БАБАЕВ полковникăн саперĕсем; ТАРАСОВ майорăн, ЛИТОВЧЕНКО майорăн, КОЛОДЕЕВ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, малта асăннă хуласене туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 12-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, иксĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ТЧЕВ, ВЕЙХАРОВО тата ПУЦК хулисене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, малта асăннă хуласене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи мартăн 12-мĕшĕ. № 299.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне **ЖУКОВА**
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-полковника **МАЛИНИНА**

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, вăйлăн çапăçнă хыççăн, паян, мартăн 12-мĕшĕнче, КИСТЖИНЬ (КЮСТРИН) хулипе крепоçне—çулйĕрсен паха узелне тата нимĕçсен ОДЕР шывĕ çинчи оборонин хăватлăн тĕреклетнĕ пунктне, БЕРЛИН патне пымалли вырăнсене хӳтĕлесе тăракан искерне,—штурмласа туртса илнĕ.

КИСТЖИНЬ хулипе крепоçне туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: БЕРЗАРИН генерал-лейтенантăн, ВАРФОЛОМЕЕВ генерал-майорăн, КУЩЕВ генерал-майорăн, ЖЕРЕБИН генерал-майорăн, ДОРОФЕЕВ генерал-майорăн, СЫЗРАНОВ генерал-майорăн, ЛЮБКО подполковникăн, КОЗЛОВ подполковникăн, ЧАЙКА подполковникăн, КУРКАЦИШВИЛИ подполковникăн, ФЕДОТОВ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн КОСЕНКĂН, артиллери генерал-майорĕн БРЮХАНОВĂН, ФИЛИППОВИЧ полковникăн, ПЕВНЕВ полковникăн, ГУТИН полковникăн, МЕНЬШИКОВ полковникăн, ЛОБАНОВ полковникăн, ПАВЛОВ полковникăн, ЗУБОВ подполковникăн, СОКОЛОВ полковникăн, МИШИН подполковникăн, ЧЕРНЫШКОВ подполковникăн, АШИХМИН подполковникăн, СКВОРЦОВ подполковникăн, ЖОХОВ подполковникăн, МИХАЙЛОВ полковникăн, МАХМУДОВ майорăн, САЗОНОВ подполковникăн артиллерисчĕсем; ЖИЛ подполковникăн, СУЗДАЛОВ подполковникăн танкисчĕсем; ФЕДОРЕНКО полковникăн, БЕРКАЛЬ полковникăн, ТИМОФЕЕВ полковникăн, КАЛИНИН полковникăн, ФЕДОРОВ полковникăн летчикĕсем; КУЗЬМИН полковникăн, БЛОХИН майорăн, НОМЕРОВСКИЙ майорăн, БЛИНОВ майорăн саперĕсем; СТЕПАНОВ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, КИСТЖИНЬ (КЮСТРИН) хулипе крепоçне туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 12-мĕшĕнче, 23 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, иксĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, КИСТЖИНЬ хулипе крепоçне туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, КИСТЖИНЬ хулипе крепоçне туртса илессишĕн çапăçнă çĕрте пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи мартăн 12-мĕшĕ. № 300.

КОЛХОЗСЕМ ВАЛЛИ СПЕКТАКЛЬСЕМ

Чăвашсен Академиллĕ Театрĕн Калининри филиалĕ ку таранччен эстрадăллă репертуарпа кăна ĕçленĕ пулнă. Халь вăл пысăк пьесăсемех лартма тытăнать. Филиал репертуарне Н. В. Гоголĕн «Авлану» комедине, А. Еçхĕлĕн «Хĕвел пахчи» ятлă пьесине Н. Айзманăн çĕнĕ пьесине кĕртнĕ.

Г. ХИРБЮ КОМПОЗИТОРАН ÇĔНĔ ПРОИЗВЕДЕНИЙĔСЕМ

Чăвашсен çамрăк композиторĕ Г. Я. Хирбю кăçал чылай произведенисем çырнă. Вăл уйрăмăн юрлама (фортепианăпа пĕрле) халăхăн 3 юррине гармониленĕ, А. Еçхел, Н. Васянка поэтсен сăмахĕсем çине 3 юрă çырнă. Кусем—хор валли.

Кунсăр пуçне Г. Хирбю ЧАССР 25 çул тултарнă ятпа оркестр валли марш çырса пĕтернĕ, халĕ кантата çырать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 10-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 10-мĕшĕнче пирĕн çарсем ДАНЦИГ хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре малалла тапăнса пынă. ТИГЕНХОФ хулине тата ЮНГФЕР, НОЙШТЭДТЕРВАЛЬД, ЛАДЕКОПП, ТИБЕ, МАРИЕНАУ, НИДАУ, ХАЛЬБШТАДТ, МИЛЕНЦ, ГРОСС МОНТАУ ялĕсене туртса илнĕ.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, ДАНЦИГ хули енчи ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, мартăн 10-мĕшĕнче чугун çулсемпе шоссе çулĕсен паха узелĕсене—ЛАУЕНБУРГ хулипе КАРТУЗЫ (КАРТХАУЗ) хулине—туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 300 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ВАЛДАУ, ДАЛЬВИН, ШЕНЕК, ГРОСС ГОЛЬМКАУ, ГРЕНЦДОРФ, КОБИССАУ, МИХАУЦИН, СИРАКОВИТЦ, БУТЦКОВ, ЦЕВИТЦ, НОЙЕНДОРФ, ЛАНКОПФ, ВИТЦИГ, ЦЕЦЕНОВ, ГИЗЕБИТЦ, СМОЛЬЗИН ятлă пысăк ялсем.

ШТЕТТИН хули енче пирĕн çарсем ЕГЕРСВАЙЛ, ФРАНЦУЗЕН, БУХХОЛЬЦ, КЛЕБОВ ялĕсене туртса илнĕ.

Мартăн 9-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Венгрире, БАЛАТОН кӳллинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, ДУНАЙ шывĕ çине татса тухма хăтланакан тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă. Тăшман хăйĕн çыннисене темĕн чухлĕ пĕтерсе çапăçса, уйрăм участоксенче пирĕн çарсен оборонин ăшне кăштах кĕрсе кайнă. Мартăн 9-мĕшĕнче ку районра нимĕçсен 72 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă тата разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Мартăн 9-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 113 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлă артиллери тăшманăн 83 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРЕН АВИАЦИ ДАНЦИГ ХУЛИПЕ КЕНИГСБЕРГ ХУЛИНЕ ПЫРСА ТАПАННИ

Мартăн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн йывăр бомбардировщиксем Данциг хулипе Кенигсберг хулине пырса тапăннă, çав хуласенчи çар промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнине пула, Данциг хулинче нумай тĕлте пушарсем тухнă. Уйрăмах вăйлă пушарсем портра тата чугун çул узелĕн территорийĕнче пулнă.

Кенигсберг хулинче темиçе тĕлте пушарсем тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

МАРТĂН 11-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 11-мĕшĕнче пирĕн çарсем ДАНЦИГ хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ВИСЛА шывĕн хĕвелтухăç хĕррипе çурçĕрелле наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 40 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра—БРЕСКЕ, НОЙТАЙХ, АЙХВАЛЬДЕ, ТРАЛАУ, ГРОСС, ЛИХТЕНАУ, КЛАЙН ЛИХТЕНАУ, ЛИССАУ ятлă пысăк ялсем.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем ДАНЦИГ хули енче çаплах наступлени туса пынă, ЛЕБА хулине тата ытти 200 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — КЕЛН, ПОМИЧИН, СТАРАХУТТА, ЛЕБНО, ВИШЕТЦИН, ГРОСС БОШПОЛЬ, ЛУЗИН, ЗЕЕЛАУ, ГНЕВИН, ЛЮБЛОВ ятлă пысăк ялсем. Мартăн 10-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем 1.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

КОЛЬБЕРГ хули районĕнче пирĕн çарсем хулан хĕвелтухăç пайĕнче хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Мартăн 10-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче ку районра 1.600 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Венгрире, БАЛАТОН кӳллинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа хаяррăн çапăçнă, гитлеровецсен танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă. Мартăн 10-мĕшĕнче ку районра пирĕн артиллери нимĕçсен 95 танкне пĕтерсе тăкнă, кунсăр пуçне, пирĕн минăсем çине пырса кĕрсе, 57 танк сирпĕнсе кайнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 10-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче тăшманăн 187 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă.

☆ ☆ ☆

Данциг хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем Висла шывĕн хĕвелтухăç хĕррипе çурçĕрелле куçса пынă. Шыв каналĕсем йышлă пирки çӳреме йывăр пулса тăнă вырăнпа усă курса, тăшман хытă хирĕç тăнă. Çулсем тăрăх минăсем лартса тухса тата час-часах контратакăсем туса, нимĕçсем совет чаçĕсене малалла кайма чарма хăтланнă. Чугун çулсен узелĕ тата нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕ пулса тăракан Нойтайх ялĕ патĕнче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Пирĕн пĕр стрелковăй часть Нойтайх ялне çурçĕр енчен çавăрса илнĕ. Çав вăхăтрах ытти чаçсем тăшмана кăнтăр тата хĕвелтухăç енчен пырса çапнă. Вăйлă çапăçнă хыççăн Нойтайх ялне тăшмантан тасатнă. Нимĕç пехотине пĕр батальон ытла пĕтерсе тăкнă. 18 тупă, 41 пулемет, винтовкăсем, автоматсем тата боеприпас нумай тытса илнĕ.

* * *

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсем Данциг енче çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Пирĕн çăмăллĕн куçса çӳрекен соединенисемпе пехота Бренкенхоф каналĕ урлă каçнă та çурçĕрелле ыткăннă. Леба хули районĕнче тăшман пысăк вăйĕсем пухнă та çав Балтика тинĕсĕ хĕрринчи тĕреклетнĕ паха пункта хăй аллинчех тытса хăварма хăтланнă. Совет чаçĕсем тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă, вара нимĕçсене хăйсем хăватлăн пырса çапнă та Леба хулине туртса илнĕ. Пирĕн хĕвелтухăçнелле наступлени тусе пыракан ытти чаçсем 20 километр малалла кайнă та тăшманпа Нойштадт хулине пырса кĕмелли çулсем çинче çапăçма пуçланă. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан тăшман йывăр çухатусем тӳсет. Тулли мар даннăйсем тăрăх, кун каçиччен 2.500 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ, вăл шутра—23 танк, 51 паровоз, 12 чугун çул эшелонĕ, çар хатĕрĕсем тиенĕ 1.700 лав тата çар пурлăхĕн 21 склачĕ.

Совет боецĕсем нимĕç захватчикĕсемпе паттăррăн та хăюллăн çапăçаççĕ. Дмитриев старшина, разведчиксен ушкăнне ертсе пырса, тăшман тылне тухнă та нимĕç саперĕсем сыхласа тăракан кĕпер патне пырса çитнĕ. Пирĕн разведчиксем гитлеровецсене сасартăк тапăннă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă, ыттисене тыткăна илнĕ. Резвых старши сержант командир пулса ертсе пыракан саперсен подразделенийĕ танксен ушкăнĕпе пĕрле пынă. Совет танкĕсене малалла кайма тарăн канав чарса лартнă. Тăшман вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах, саперсем çав канава тултарса лартнă та танксене çул уçса панă. Малалла куçса пынă май çав подразделенири боецсем гитлеровецсен ушкăнне тĕл пулнă, вĕсемпе çапăçма пуçланă. Автоматсемпе персе, саперсем 30 нимĕçе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кольберг хули районĕнче пирĕн çарсем хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Çав тери хăвăрт малалла куçса пырса, пĕр соединени чаçĕсем Кольберг хулинчен хĕвеланăçнерехре Балтика тинĕсĕ хĕррине тухнă та тăшман гарнизонĕн каялла чакмалли çулĕсене татса илнĕ. Çав тери хăвăрт пыра-пыра çапса, пирĕн боецсем хулан хĕвеланăç пайне тăшмантан тасатнă. Пирĕн ытти подразделенисем çĕрле Кольберг хулин хĕвелтухăç хĕррине вăркăнса кĕрсе кайнă. Нимĕçсен икĕ енчен хĕстерсе лартнă йышлă гарнизонĕ питĕ хытă хирĕç тăрать. Пирĕн штурмлакан ушкăнсем урам хыççăн урама тăшмантан тасатаççĕ. Нимĕçсенчен нумай хĕçпăшал тата боеприпас склачĕсем тытса илнĕ.

* * *

Венгрире, Балатон кӳллинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата хĕвелтухăçнерехре, пирĕн çарсем тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă. Тыткăна илнĕ нимĕçсем çапла каласа кăтартаççĕ: нимĕçсен командованийĕ пире темĕн чухлĕ вăй пĕтмелле пулсан та Дунай шывĕ çине тухма приказ панă, теççĕ. Пирĕн артиллери, хăватлăн персе, нимĕçсен танкĕсене тата автоматчиксем ларнă бронетранспортерĕсене каялла хăвала-хăвала ярать. Анчах та вĕсем çĕнĕрен те çĕнĕрен пысăк хăвăртлăхпа пырса атакăлаççĕ, пирĕн çарсен çапăçури ретĕсене татма тăрăшаççĕ. Совет пехотинецĕсем, артиллерисчĕсемпе бронебойщикĕсем тăшман атакисене паттăррăн сире-сире яраççĕ. Кун каçиччен 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Пирĕн позицисем патне пымалли вырăнсене тăшманăн персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă танкĕсемпе хăй тĕллĕн çӳрекен туписем тата бронетранспортерĕсем нумай тăрса юлнă.

Осоавиахим организацийĕсенчи отчетпа суйлав кампанийĕ

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче Осоавиахим организацийĕсем Хĕрлĕ Çара пулăшас тĕлĕшпе тата совет государствин оборона хăватне ӳстерес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Автоматчиксен, снайперсен, радистсен, телефонистсен отрячĕсем, Осоавиахим организацийĕсем вĕрентсе кăларнăскерсем, Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче хастарлăн çапăçаççĕ.

1944 çулта Чăваш республикинчи Осоавиахим организацийĕсем çĕршер те пиншер çар специалисчĕсем хатĕрленĕ. 1944 çул валли панă задание 133 процент пурнăçланă. Чăваш республикинчи Осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕсенче вĕренӳ подразделенийĕсем нумай ĕçлеççĕ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, мартăн 1-мĕшĕнчен пуçласа майăн 1-мĕшне çити вăхăтра Осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем тата районри конференцисем пулса иртмелле.

Осоавиахим организацийĕсен отчетпа суйлав кампанийĕ ПВХО ăмăртăвĕсем вăхăтĕнче пулса иртет. Осоавиахимăн кашни пуçламĕш организацийĕ отчетпа суйлав пухăвĕ тĕлне «Готов к ПВХО» нормисене партарас ĕçе пурнăçламалла. Çав вăхăтра ПВХО ĕçне вĕреннĕ çынсене пурне те справкăсем памалла. ПВХО енĕпе массăллă ăнлантару ĕçне вăйлатмалла: лекцисем, докладсем, калаçусем ирттермелле. Час-часах походсем тата противогазсем тăхăнса тренировкăсем ирттермелле.

Осоавиахимăн кашни пуçламĕш организацийĕ отчетпа суйлав пухăвĕсем тĕлне оборонăллă кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттермелле. Вĕренӳ формированийĕсем çук çĕрте вĕсене халех организацилемелле, хĕçпăшал тытма пултаракан граждансене пурне те çав ĕçе хутшăнтармалла.

Осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕсен отчетпа суйлав пухăвĕсем тĕлне член укçине 100 проценчĕпех пухса çитермелле, 14 çула çитнĕ граждансене пурне те Осоавиахим членне кĕртме тăрăшмалла. Отчетпа суйлав пухăвĕсем умĕн фронта пулăшас тĕлĕшпе тĕрлĕ ĕçсем туса ирттермелле: Хĕрлĕ Çара пулăшас тĕлĕшпе укçа-тенкĕ пухмалла, фронтовиксен тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем туса ирттермелле.

Пуçламĕш организацин е Осоавиахим райсовечĕн отчечĕ хыççăн ревизи комиссийĕсен содоклачĕсем пулмалла. Осоавиахимăн отчетпа суйлав кампанийĕ организацири пур çитменлĕхсене те палăртмалла.

Осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕсен отчетпа суйлав пухăвĕсенче Осоавиахим пуçламĕш организацин советне, ревизи комиссине тата Осоавиахимăн районри конференцине кайма делегатсем суйламалла.

Районри (хулари) конференцисем, делегатсен тăватă пайĕнчен виçĕ пайĕ пынă пулсан, тивĕçлĕ шутланаççĕ. Районри конференцисем Осоавиахимăн райсовет председателĕн докладне, ревкомиссин содокладне сӳтсе яваççĕ, райсовет ĕçне хак параççĕ тата Осоавиахим организацийĕсен малашнехи задачисене палăртса хураççĕ. Осоавиахимăн районри (хулари) советне 30—40 çынтан, ревизи комиссине 5—7 çынтан суйласа хăвараççĕ. Районри (хулари) совет хăйĕн пленумĕнче 7—9 çынтан президиум суйласа хăварать.

Мартăн 1-мĕшĕнчен пуçласа чылай районсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртрĕç. Çак кунсенчех отчетпа суйлав пухăвĕсем ытти районсенче те пуçланмалла. Анчах та хăшпĕр районсенче отчетпа суйлав пухăвĕсене çителĕклĕ хатĕрленмен. Осоавиахимăн Куславкка райсовечĕ ку тĕлĕшпе нимĕн те туман. Тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, Куславкка районĕнче пуçламĕш организацисем пурте ĕçлеменнине, вĕсенчен хăшпĕрисем саланса кайнине палăртнă. Йĕпреç районĕнче 37 колхозра, 11 предприятипе артельре, 5 учрежденире ку тарана çитсе те Осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕсем çук. Тăвай районĕнчи пуçламĕш организацисене райсовет пачах та ертсе пымасть, Красноармейски районра 61 колхозра, предприятисемпе артельсенче тата 6 учрежденире ку тарана çитсе те Осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕсене туса йĕркелемен. Ытти хăшпĕр районсенче те çакăн пек çитменлĕхсем пур.

Отчетпа суйлав пухăвĕсем кĕске вăхăтра иртеççĕ. Суйлавсен пирвайхи кунĕсенче пулнă йăнăшсене халех тӳрлетмелле, пуçламĕш организацисене вăйлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсем тумалла. Осоавиахимăн отчетпа суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче колхозсенче, предприятисенче, совхозсенче, МТС-сенче, учрежденисемпе вĕренӳ заведенийĕсенче, шкулсенче пурне те Осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕсене туса йĕркелеме тăрăшмалла.

А. НИКИТИН.

Осоавиахимăн Чăваш республикинчи Центральный Совечĕн председатель заместителĕ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ПАТТĂРĔСЕМ

Артиллерист, старши лейтенант Павел Карпович Карпов вăрçă пуçланнăранпах нимĕç захватчикĕсемпе вăйлăн çапăçать. Белосток хулине ирĕке кăларассишĕн хăюллă та паттăррăн çапăçнăшăн командовани Карпов юлташа 1944 çулхи июль уйăхĕнче Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса наградăланă. 1944 çулхи октябрь уйăхĕнче Нарев шывĕ урлă хăюллă каçса кайса нимĕçсене вирлĕн персе çĕмĕрнĕшĕн Карпов юлташа 2-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденне панă.

П. Карпов нумайччен Шупашкарта ВКП(б) Обкомĕнче, унтан Шупашкарпа Канаш хушшинчи чугун çул строительствин Управленийĕнче ĕçлесе пурăннă.

Карпов юлташ Шупашкар районĕнчи Пĕчĕк Чĕкĕрте çуралса ӳснĕ.

Ӳкерчĕк çинче: пирĕн земляк-артиллерист, старши лейтенант П. К. Карпов.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Вырăнти топливо хатĕрлекен предприятисен, апат-çимĕç комбиначĕсен тата промысла кооперации артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн февраль уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ, вырăнти топливо промышленность Управлени предприятийĕсен, районсемпе хуласенчи апат-çимĕç комбиначĕсен тата промысла кооперации артелĕсен февраль уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, çаксем мала тухнине палăртнă:

Вырăнти топливо хатĕрлекен предприятисем енĕпе

Шупашкар вăрманпромхозĕ (директорĕ Кобяков юлташ) мала тухнă. Вăл вутă хатĕрлемелли плана касас енĕпе 155 процент, турттарас енĕпе 116 процент тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне çак вăрманпромхоз аллинчех хăварнă тата ăна 20 пин тенкĕ укçа панă.

Йĕпреç вăрманпромхозĕ (директорĕ Гордеев юлташ) вутă хатĕрлемелли плана касас енĕпе 219 процент, турттарас енĕпе 440 процент тултарнă. Ку вăрманпромхоза пĕрремĕш преми—15 пин тенкĕ панă.

Çĕмĕрле вăрманпромхозне (директорĕ Крутов юлташ) тата Пăрачкав вăрманпромхозне (директорĕ Зобнин юлташ) иккĕмĕш преми—10-шар пин тенкĕ панă.

Апат-çимĕç комбиначĕсем енĕпе

Канаш хулинчи апат-çимĕç комбиначĕ (директорĕ Захватова юлташ) мала тухнă. Вăл пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 198,8 процент тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Вăрнар районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕнчен илсе, Канаш хулинчи апат-çимĕç комбинатне пама йышăннă тата ăна 6 пин тенкĕ укçа памалла тунă.

Февраль уйăхĕнче Улатăр, Вăрнар, Йĕпреç, Кувакино, Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар тата Комсомольски районсенчи апат-çимĕç комбиначĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Промысла кооперации артелĕсем енĕпе

Караньялĕнчи «Труд» артель (правлени председателĕ Мокеев юлташ) мала тухнă. Пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана вăл 114,3 процент тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Шупашкарти «Пекарь» артельтен илсе, «Труд» артеле пама йышăннă тата ăна 10 пин тенкĕ преми панă.

Çĕрпӳ районĕнчи Абакасси ялĕнчи Громов ячĕпе тăракан артель (правлени председателĕ Егоров юлташ) пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 145,5 процент тултарнă. Артеле 4 пин тенкĕ преми панă.

Улатăрти «Красная звезда» артель (правлени председателĕ Громилов юлташ) пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 142,6 процент тултарнă. Ăна 3 пин тенкĕ преми панă.

Февраль уйăхĕнче Шупашкарти «Пекарь», Сĕнтĕрвăрринчи «Парижская Коммуна», Кувакинăри «XIX лет Октября», Канашри «Авангард», Улатăрти «Красная швея», Вăрмарти Осипенко ячĕпе тăракан, Сĕнтĕр районĕнчи «Тĕрлекен» тата ытти артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Районпа кооперации промышленноçĕн 1945 çулхи тĕп задачисем

А. МАТВЕЕВ.
Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ.

Кăçал январь уйăхĕн вĕçĕнче тата февраль уйăхĕн пуçламăшĕнче Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариачĕпе Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕн тата промысла кооперацийе инвалидсен кооперацийĕн активĕсен канашлăвĕсем пулса иртрĕç. Вĕсем 1944 çулхи ĕçсен итогĕсене тата 1945 çулхи задачăсене тĕплĕн сӳтсе-явнă районпа кооперации промышленность ĕçĕнчи çитменлĕхсене хăюллăн уçса палăртрĕç. Çак канашлусенче малта пыракансем хăйсен опычĕ çинчен каласа пачĕ. Халĕ ĕнтĕ районри тата кооперации промышленноçĕн мĕнпур работникĕсен, районсемпе хуласен руководителĕсен хисеплĕ задачи—палăртнă çитменлĕхсене пĕтĕмпех шута илсе вĕсене пĕтересси, мĕнпур работниксене вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерме, 1945 çулхи плана срокчен тата лайăх пахалăхпа тултарассишĕн кĕрешме мобилизацилесси пулать.

Иртнĕ çулта апат-çимĕç промышленноçĕн предприятийĕсем лайăх ĕçлерĕ. Чăваш АССР Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсем, пĕтĕмĕшпе илсен, планран иртерсе 23 процент ытлă продукци пачĕ. Уйрăмах районри апат-çимĕç промышленноçĕ лайăх ĕçленине палăртмалла. 1944 çулта районсемпе хуласенчи апат-çимĕç комбиначĕсем государство планне пĕтĕм продукци туса кăларас енĕпе 39 процент иртерсе тултарнă. Çапла вара иртнĕ çулта 1943 çулхинчен 93,5 процент ытларах продукци туса кăларнă. Канаш хулинчи (директорĕ Захватова юлташ), Кувакинăри (директорĕ Жоров юлташ), Çĕмĕрлери (директорĕ Сиротта юлташ) апат-çимĕç комбиначĕсем уйрăмах лайăх ĕçленĕ.

Вырăнти тата кооперации промышленноçĕнчи хăшпĕр юлташсем, хăйсен начар ĕçне тӳрре кăларас шутпа, районри апат-çимĕç промышленноçĕ пĕлтерĕшне чакарма пикенеççĕ, апат-çимĕç промышленноçĕнче ĕçлеме çăмăлтарах тесе шутлаççĕ. Ку тĕрĕс мар. Йывăрлăхсем апат-çимĕç промышленноçĕнче те пур. Анчах та çав промышленноçри предприятисен руководителĕсем тата рабочисем йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма пĕлеççĕ.

Апат-çимĕç промышленноçĕн пĕлтерĕшĕ вара çак фактран та лайăх курăнса тăрать: вăл 1944 çулта вырăнти чĕртавартан 19 продукт тăрăх кăна 2.677 тонна апат-çимĕç туса кăларнă. Çавăн чухлĕ продуктсем туса кăлармашкăн районсемпе хуласенчи апат-çимĕç комбиначĕсем 6—7 пин тоннăран кая мар чĕртаварсем тата топливо хатĕрлесе сыхласа усрамалла пулнă. Вăрçă çулĕсенче ку пысăк ĕç пулса тăрать. Акă, сăмахран, Канаш хулинчи апат-çимĕç комбиначĕн коллективĕ хăйĕн подсобнăй хуçалăхĕнче пахча-çимĕç культурисем 18 тонна ытла туса илнĕ. Пахча-çимĕçсене пухса кĕртнĕ чухне, транспорт çителĕксĕр пулнă пирки, пахча-çимĕçĕн чылай пайне рабочисем хăйсем çĕкленĕ, çапла вара пахча-çимĕçсене пĕтĕмпех упраса хăварнă.

Вырăнти тата кооперации промышленноçĕнче те 1944 çулта лайăх ĕçленĕ предприятисемпе артельсем сахал мар. Иртнĕ çулта лайăх ĕçлекенсен ретне Тăвай, Вăрнар, Куславкка, Пăрачкав промкомбиначĕсене тата Канашри «Авангард», Йĕпреçри «Красный строитель», «Помощь», Улатăрти «Красный восход», «Красная швея», Шупашкарти «Пекарь», «Лесхим-артель» тата ытти артельсене кĕртмелле. 1944 çулта пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана иртерсе тултарнă предприятисемпе артельсем 60-ран та иртеççĕ. Вĕсем, сутмалли хакпа шутласан, планран иртерсе 15 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă.

Çав вăхăтрах районсемпе хуласенчи промкомбинатсем тата промысла кооперацийе инвалидсен кооперацийĕ артелĕсем чылайăшĕ 1944 çулта начар ĕçленĕ. Çавна пула вăл отраслĕсем тăрăх пĕтĕм продукци туса кăларас енĕпе те, ассортимент тăрăх та иртнĕ çулхи плана тултарса çитереймен. Туса кăларнă продукцин пахалăхĕ те начар.

Паллах, эпир малалла çавăн пек ĕçлеме пултараймастпăр. Пирĕн хамăрăн ĕçе халех кашни предприятипе артель государство планне палăртнă чухлĕ лайăх пахалăхлă продукци туса кăлармалла туса организацилемелле. Çакна районпа кооперации промышленноçĕнчи кашни работникăн тата районсемпе хуласен руководителĕсен ăнланса илес пулать. Предприятисемпе артельсен ĕçне тата лайăхлатассишĕн пĕтĕм ответлăха туйса ĕçлеме тытăнас пулать.

Районпа кооперации промышленноçĕ 1944 çулта çителĕксĕр ĕçлени, чи малтанах, предприятисемпе артельсен руководителĕсем, хăшпĕр райсовет исполкомĕсем тата облаçри организацисен уйрăм руководителĕсем хăйсен ответлăхне туйса ĕçлеменнипе пирки, дисциплинăна сирĕппĕн пăхăнман пирки пулнă. Вăл руководительсем вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерме тăрăшмаççĕ, хăйсен начар ĕçне тĕрĕс мар цифрăсемпе витме пикенеççĕ.

Предприятисемпе артельсен ĕçĕпе хăшпĕр районсен руководителĕсем пачах интересленмеççĕ. Сăмахран Хĕрлĕ Чутай райсовет исполкомĕн председателĕ Т. За[illegible] юлташа илме пулать. Унăн [illegible] уйрăм артельсем, райпромкомбинат [illegible] лланса кайнă кирпĕч сарайне аркатса пĕтернĕ. «Стахановец» тата «Сура» артельсен [illegible] сала[illegible] [illegible]. Апла пулин те райсовет исполкомĕ нимĕнле мерăсем те йышăнман. Ишлей, Етĕрне тата ытти хăшпĕр районсен руководителĕсем те хăйсен предприятийĕсене çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Асăннă районсен руководителĕсен çак çитменлĕхе халех пĕтерес пулать.

Районпа кооперации промышленноçĕн ĕçне лайăхлатмалли майсенчен пĕри вăл — предприятисемпе артельсене пултаруллă тата хăйсен ĕçне юратакан кадрсем парса ирттересси пулать. Предприятие е артеле пултаруллă, хăйĕн ĕçне пĕлекен тата юратакан çын ертсе пырать пулсан унта государство планĕ те ăнăçлăн тулса пырать, предприятипе артель ĕçĕ кулленех ӳссе пырать. Ку тĕлĕшпе Жоров (Кувакино районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕ), Захватова (Канаш хулинчи промкомбинат), Васильев («Авангард» артель), Мокеев (Караньялĕнчи «Труд» артель), Игнатьев (Тăвай районĕнчи промкомбинат) юлташсен ĕçĕсем лайăх пример пулса тăраççĕ. Вĕсем хăйсем ĕçлеме тытăннăранпа предприятисен ĕçне нумай лайăхлатнă тата хăйсен хуçалăхне аталантарса пынă.

Районпа кооперации промышленность предприятийĕсене ертсе пырасси—çăмăл ĕç мар. Промкомбинат директорĕ е артель председателĕ чылай чухне главнăй инженерăн, ОРС начальникĕн ĕçне те туса пырать. Массăллă-ăнлантарулла ĕçе тăвас тĕлĕшпе те ответлăх ун çинче тăрать. Чылай чухне унăн транспорт пулмасть тата материалсемпе чĕртаварсем те план тăрăх илсе тăраймасть. Çавăнпа та ăна халăх комиссариачĕпе союзсем енчен производствăна тĕрĕс те лайăх йĕркелес тĕлĕшпе, материалсемпе инструментсем тупса парас тĕлĕшпе кулленех пулăшса тăни кирлĕ. Районсемпе хула совет исполкомĕсен хăйсен предприятийĕсемпе артельсене, чи малтанах, ĕç вăйĕпе транспорт парса пулăшмалла тата ĕçлекенсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас, рабочисем хушшинче воспитани ĕçне çĕклес енĕпе пулăшса пымалла. Çавăнпа пĕрлех предприятисемпе артельсен ĕçне пĕрмаях тĕрĕслесе тăрас пулать. Лайăх кадрсем хăйсем тĕллĕн ӳсеççĕ, вĕсене пăхса ӳстерес пулать. Сахал опытлă руководительсене кулленхи ĕçре пулăшмалла, вĕсене дисциплинăна пăхăнма государство ĕçĕ çине тӳрĕ кăмăлпа пăхма вĕрентмелле.

Кадрсене суйласа илесси тата тĕрĕс ертсе пырасси пысăк ĕç пулса тăрать. Анчах пирĕн хăшпĕр юлташсем çав ĕç çине питех те çăмăллăн пăхаççĕ. Çавна пула вара çынсене чылай чухне ним сăлтавсăрах улăштараççĕ. Советски районри промкомбинатра 1944 çулта кăна 4 управляющи улшăннă. Комсомольски районри Вутланти артель тăватă уйăх хушши руководительсĕр пурăннă, Ишлей районĕнчи «20 лет Октября» артельте иртнĕ çулта çулталăкĕпех председатель пулман.

1945 çулта пирĕн районпа кооперации промышленноçне халăх хуçалăхĕн малта пыракан отраслĕ туса хумалла. Паллах çакна рабочисен тата артельсен членĕсен активлăхне çĕклемесĕр пурнăçа кĕртме çук. Районри промышленность предприятийĕсемпе артельсенче политикăллă воспитани ĕçне халĕ çителĕксĕр туса пыраç-ха. Комсомолпа профсоюз организацийĕсен ĕçĕ те сахал палăрать-ха. Пăрачкаври инвалидсен «Новый путь» артелĕнче 1943 çулта Октябрь уявĕ ячĕпе кăларнă стена хаçачĕ 1945 çул пуçланичченех çакăнса тăнă. Çав районри «Красный пищевик» артельте стена хаçачĕ юлашки хут 1944 çулхи июнь уйăхĕнче тухнă. Промысла артелĕсенчи хĕрлĕ кĕтессемпе клубсенчен нумайăшĕсем хупăнса тăраççĕ. Районсенчи промкомбинатсемпе апат-çимĕç комбиначĕсенче чылайĕшĕнче хĕрлĕ кĕтессемпе клубсем пачах организацилемен.

Предприятисемпе артельсенче ĕçлекенсем нумайĕшĕ—çамрăксемпе хĕрарăмсем. Вĕсене культурăпа ӳстерес тĕлĕшĕнчен пулăшни тата вĕрентни кирлĕ. Художествăлла пултарулăх кружокĕсем организацилемелле, çапла спорт мероприятийĕсене ирттермелле. Пирĕн массăсен производствăлла активлăхне çĕклемелли мĕнпур майсемпе усă курас пулать.

Социализмлă ăмăртăва ертсе пырассине лайăхлатмалла. Ăмăртăва ертсе пырас ĕçре халĕ çитменлĕхсемпе йăнăшсем сахал мар-ха. Промысла кооперации Управленийĕ социализмлă ăмăртăва питех те начар ертсе пырать. Караньялĕнчи «Труд» артель 1944 çул пуçламăшĕнче Шупашкарти «Кожупряжь» артеле социализмлă ăмăртăва чĕннĕ. «Кожупряжь» артель руководителĕсем «Труд» артель коллективĕн чĕнĕвне илнĕ хыççăн ответ та паман. Ун хыççăн «Труд» артель» коллективĕ промысла кооперацин Управленине çыру янă пулнă. Вăл та нимĕнле мера та йышăнман, ответ та паман. Çакăн хыççăн «Труд» артель коллективĕ Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Астакассинчи «Лесоруб» артель коллективне социализмлă ăмăртăва чĕннĕ пулнă. Вăл та, темшĕн, тивĕçлĕ ответ паман. Çапла, Караньялĕнчи «Труд» артель коллективĕн хаклă пуçарăвĕ путланса ларнă.

Социализмлă ăмăртăва ертсе пырас тĕлĕшпе районсемпе хула совет исполкомĕсем те сахал ĕçлеççĕ-ха. Вĕсем ăмăрту итогĕсене тăтăшах туса пынă пулсан артельсен ĕçĕсем те лайăхрах пулнă пулĕччĕ. [illegible] артельсен социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсем çинчен сайра пичетлеççĕ. Социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла тăвас тесен, ăмăрту итогĕсене пĕтĕм рабочисене пĕлтерсе тăмалла. Правительство постановленийĕнче палăртнă предприятисемпе çынсем çинчен пĕтĕм республика пĕлсе тăма пултартăр. Вĕсем мĕнле ĕçлесе чапа тухни çинчен каласа парас пулать. Ăмăрту итогĕсене тунă чухне малта пыракансене кăна мар, кая юлакансене те палăртмалла. Çавăн пек туни кая юлакансене малтисемпе танлашма пулăшать.

Предприятисенчи стахановецсен опытне сарас тата ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе производствăллă канашлусемпе çителĕксĕр усă кураççĕ-ха. Хăшпĕр чухне пухăнса калаçаççĕ те тепĕр эрнерен манса каяççĕ. Предприяти директорĕсем производствăлла канашлусенче панă сĕнӳсене хисепе илсе, вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшмаççĕ. Производствăллă канашлусем плана тултарас ĕçре директорăн чи сывăх помощникĕ пулса тăмалла.

Ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пымасăр, предприятисен ĕçне лайăхлатасси пирки калаçмалли те çук. Ĕç тухăçлăхне ӳстерес ыйту вырăнти тата кооперации промышленноçĕн предприятийĕсемпе артелĕсенче çивĕччĕн тăрать. Ĕç тухăçлăхне ӳстермелле тăвас тесен, ĕç дисциплинине çирĕплетмелле, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла, рабочисен рационализациллĕ сĕнĕвĕсене пурнăçламалла, ĕç укçи тӳлессине йĕркелемелле тата рабочисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас пулать. Анчах та хăшпĕр руководительсем ку тĕлĕшри çитменлĕхсем çине сахал çаврăнса пăхаççĕ. Акă сăмахран, Сĕнтĕр районĕнчи «Дружба» артельте кăçал январь уйăхĕнче кашни кунах 4—5 çын прогул тунă. Пĕр кунхине унта ĕçлекен 30 çынран 12-шĕ ĕçе тухман. Вăл артельте пĕтĕм январь уйăхне уяв уйăхĕ туса хунă: çĕнĕ çула икĕ хут уявланă, ытти тĕрлĕ уявсем тунă, пилĕкшер кун хушши туй тунă. Çавна пула вара уйăхри плана пурĕ те 59 процент çеç тултарнă.

Районри тата кооперации промышленность руководителĕсен хăйсен рабочийĕсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе те тимлĕн ĕçлемелле.

Пирĕн халĕ рабочисем валли тивĕçлĕ условисем туса памашкăн лайăх майсем пур. Чылай предприятисемпе артельсем (сăмахран, Канашри «Авангард», Кувакино тата Çĕмĕрле районĕсенчи апат-çимĕç комбиначĕсем, Караньялĕнчи «Труд» артель тата ыттисем те) çав майсемпе мĕнле усă курмаллине лайăх кăтартса параççĕ. Асăннă предприятисемпе артельсем, подсобнăй хуçалăхсем туса, рабочисене апатлантарас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. 1945 çулта кашни предприятипе артелĕн подсобнăй хуçалăх организацилес пулать. Район руководителĕсен çав ĕçре вĕсене пулăшу памалла. Кашни предприятипе артель хăйне валли çĕрулми, пахча-çимĕçсем, фураж çителĕклĕ таранах акса тума тивĕçлĕ. Районсенчи агрономсемпе канашласа, подсобнăй хуçалăхсенче агротехникăллă мероприятисене ĕçе кĕртмелли план туса хумалла.

Подсобнăй хуçалăх организацилес тени вăл тырпулсемпе пахча-çимĕçсем акса тăвассине кăна пĕлтермест. Подсобнăй хуçалăхра, вырăнти условисемпе усă курса, выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк, пыл хурчĕсем ĕрчетмелле, пулă тытассине, куракăсемпе çырласем тата кăмпасем хатĕрлессине организацилемелле.

Районри тата кооперации промышленноçĕн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе 1945 çулта пурнăçламалли мероприятисем çинчен Чăваш АССР Совнаркомĕн решенийĕсенче тĕплĕн кăтартса панă. Халĕ ĕнтĕ пирĕн задача çав мероприятисене пурнăçа кĕртесси пулать.

Плана тултарас ĕçре артельсемпе предприятисене çуллахи вăхăтра чĕртаварсем [illegible] татăклă вырăн йышăнса тăрать. Промсоюзсен хăшпĕр артелĕсен тата Первомайски Шăмăршă, Йĕпреç, Красноармейски Советски, Шупашкар, Чкаловски, Çĕмĕрле, Етĕрне районĕсенчи промкомбинатсен иртнĕ çулта чĕртаварсем тата ĕç вăйĕ çителĕксĕр пулнă. Анчах та асăннă районсенчи руководительсем предприятисемпе артельсене чĕртаварсем тата ĕç вăйĕ парса пулăшассине хăйсен ĕçĕ вырăнне хумаççĕ. Ĕç çине çавăн пек пăхсан, предприятисемпе артельсен ĕçне лайăхлатма çук.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ 1944 çулхи ноябрĕн 22-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, райсовет исполкомĕсен хăйсен районĕнчи промкомбината тата кашни артеле кирлĕ чухлĕ [illegible] вăйĕ уйăрса пама тăрăшмалла.

Промкомбинатсемпе промысла артелĕсем [illegible] малтанхи икĕ уйăх хушшинче те çителĕксĕр ĕçлерĕç. Халех татăклă мерăсем йышăнмасан çулталăкри плана тултарассине хăрушлăх умĕнче пулать. Çавăнпа та районсемпе хула совет исполкомĕсен, халăх комиссариачĕсен союзсен вăхăта вăраха ямасăр хăйсен промкомбиначĕсемпе артелĕсен ĕçне лайăхлатмалла тăвас пулать.

Вырăнти тата кооперации промышленноçĕпе апат-çимĕç промышленноçĕн мĕнпур работникĕсен задачи—социализмлă ăмăртăва вăйлăн сарса пырса, çитменлĕхсене пĕтерсе, хăйсен артелĕсемпе предприятийĕсен ĕçне лайăхлатасси, плана пур ассортиментсем тăрăх та уйăхран-уйăха тултарса пымалла тăвасси пулать.

Конференцие лайăх хатĕрленсе ирттерчĕç

ЙĔПРЕÇ. Çак кунсенче комсомолăн район XI-мĕш конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференци ВЛКСМ райкомĕн ĕçĕсем çинчен отчетлă доклад итлесе сӳтсе-яврĕ тата комсомол райкомĕн çĕнĕ составне суйласа хăварчĕ.

Комсомолăн районри организацийĕ иртнĕ çулсенче хăйĕн ĕçне нумай лайăхлатнă. Пĕтĕм ĕçе «Йăлтах фронт валли» текен лозунгпа туса пынă. Вăрçă техники тума комсомолецсем вăйĕпе 100 пин тенкĕ укçа тата фронтри воинсем валли ăшă кĕпе-тумтирсем нумай пухса панă. Донбасс ачисене пулăшма 53.400 тенкĕ укçа пухнă. Комсомол шеф пулса тăракан Балтика флочĕн морякĕсем патне 1000 килограмм тĕрлĕ апат-çимĕç янă.

Фронта пулăшас тĕлĕшпе районри комсомолецсем пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеççĕ. Инвалидсен «Помощь» артелĕнчи Кормильцева юлташ ертсе пыракан комсомолецсен бригади кулленхи ĕç нормине 170—180 процент тултарса пырать. Нина Косова, Штурманова комсомолкăсем уйăхри ĕç нормине 200—240 процентран кая мар тултарса пыраççĕ. Вармента ĕçлекен комсомолецсем те ытти çамрăксене пример кăтартса ĕçлеççĕ. Нумайĕшĕсем ĕç нормисене 150—200 процент тултараççĕ.

Комсомолецсем пур ĕçре те малта пыни вĕсен авторитетне нумай хăпартрĕ. Çавна пула районри организаци йышĕ кулленех ӳссе пырать. Иртнĕ çулта çĕнĕрен 22 пуçламĕш организаци туса йĕркеленĕ, вĕсенчен 11-шĕ колхозсенче.

Халĕ комсомолецсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. «Путиловка» колхозри комсомолецсем планран иртерсе уя 700 лав ытла тислĕк кăларнă.

Комсомолăн районри организацийĕн ĕçĕнче çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Отчетлă тапхăрта ВЛКСМ райкомĕн секретарĕсем 10 хутчен улшăннă. Çавна пула пуçламĕш организацисене ертсе пырас ĕç, дисциплина, комсомол хуçалăхĕ кирлĕ вырăнта пулман. Комсомолецсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе ВЛКСМ райкомĕ çителĕксĕр ĕçлет. Хăшпĕр организацисенчи комсомолецсем политшкулсене çӳремеççĕ, хăйсем тĕллĕн вĕренмеççĕ.

Паянхи куна районри 18 колхозра комсомол организацийĕсем çук. ВЛКСМ райкомĕ çамрăксем комсомола кĕме ыйтса панă заявленисене вăхăтра пăхса тухмасть. Отчетлă тапхăрта 23 заявление 2—3 уйăх хушши пăхса тухмасăр выртарнă.

Отчет тăрăх прение 14 çын тухса калаçрĕç. Тухса калаçакансем, ВЛКСМ райкомĕн ĕçĕнчи нумай çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса пачĕç.

Конференци ВЛКСМ райкомĕн пленумне 25 çынран суйларĕ. Пленумăн организацилле ларăвĕнче ВЛКСМ райкомĕн 1-мĕш секретарĕ пулса ĕçлеме В. Афанасьев юлташа суйласа хăварнă.

П. КУРАКОВ.

Укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин выляве умĕн

Чăваш республикинчи ĕççыннисем, Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисем пекех, укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсене вырнаçтарас ĕçе пысăк çĕкленӳпе ирттерчĕç. Рабочисем, колхозниксем тата служащисем лотерея билечĕсене хапăл туса туянчĕç. Чылай предприятисен, учрежденисен тата организацисен коллективĕсем лотерея билечĕсене уйăхри ĕçукçин 35—50 процентĕ чухлĕ илчĕç.

Укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсене республикăра пĕтĕмпе 45.917.000 тенкĕлĕх (виççĕмĕш лотерейăпа танлаштарсан 11.230.000 тенкĕ ытларах) вырнаçтарнă. Çак ĕçе уйрăмах Октябрьски, Вăрмар, Чурачăк, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ, Тăвай, Муркаш районĕсенче ăнăçлăн ирттерчĕç. Вĕсем колхозниксем хушшинче ярнă лотерея билечĕсен укçине çийĕнчех пухса пачĕç.

Анчах та хăшпĕр районсенче çак ĕçе халиччен те вĕçлемен-ха. Шăмăршă, Элĕк, Улатăр, Вăрнар, Первомайски, Советски тата Комсомольски районĕсем лотерея билечĕсен укçине пухса çитермен.

Çак уйăхăн 15-мĕш кунĕнче Мускаврах укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин выляве пулать. Унта пурĕ 5 миллион выигрыш тухать (вĕсем пĕтĕмпе 100 миллион тенкĕлĕх).

Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсемпе пирĕн республикăри ĕççыннисем пурĕ 3 миллион тенкĕ ытла выляса илнĕ. Вĕсенчен хăшпĕрисене нумай укçа е хаклă япала тухнă. Сăмахран, В. С. Герасимов (Сĕнтĕрвăрри районĕнчен)—50 000 тенкĕ, Н. С. Герасимова (Канаш районĕнчен) тата В. И. Князев (Етĕрне районĕнчен)—25.000-шер тенкĕ выляса илнĕ. Шупашкар районĕнчи Н. Григорьев, Канаш районĕнчи А. Воронцова, Калинино районĕнчи И. С. Семенов юлташсем каракуль пальтовĕ выляса илнĕ.

Финанс органĕсемпе перекет кассисем умĕнче укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин укçине çак кунсенчех пухса çитерес тата билетсене валеçсе парас задача тăрать. Лотерея билечĕсен пулас выляви çинчен ĕççыннисене пĕлтерес пулать. Выигрышсен таблицисене илнĕ хыççăн выляв тухнине пур çĕрте те тĕрĕслес пулать.

М. ВЕСЕЛОВ.
Чăваш республикинчи перекет кассисен Управленийĕн начальникĕн заместителĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: союзниксен çарĕсем Везельтен хĕвеланăçнерехре нимĕçсен Рейн шывĕ çинчи укреплениене çĕмĕрсе тăкнă, тăшман хирĕç тăрса кĕрешекен уйрăм вырăнсене пĕтерсе тăкасси кăна юлнă. Тăшман Везель патĕнчи икĕ кĕпере те сирпĕтсе янă.

Рейн шывĕн хĕвелтухăç енчи Ремаген патĕнчи укрепление союзниксем 500—1.500 ярда çити аслăлатнă. Рейн çинчи кĕпере, тĕреклетнĕ вырăн патне илсе пыракансене, нимĕçсем тупăсемпе вăйлăн персе тăраççĕ.

Союзниксен бронетанковăй чаçĕсем Рейн шывĕ патĕнче туса хунă «хуранта» 23.000 нимĕç шутланать. Арвейлер районĕнче, Ремагенран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, союзниксем 75 тупă тытса илнĕ. Майен хулинчен хĕвеланăçнерехре тата Битбургран хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем 9 хула тытса илнĕ, вĕсем хушшинче Баулер, Ротенбах, Боденбах, Нейрот, Мандершейд, Беттенфельд, Мусвейлер, Витлих тата Нейербург хулисем.

Союзниксен бронетанковăй чаçĕсем Трир хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре 3 хула тытса илнĕ тата Трир хулинчен хĕвелтухăçнерехре тăшман тунă контратакăсене сире-сире янă. Фелль хули патне пырса тухнă.

Мартăн 9-мĕшĕнче союзниксем 6.012 нимĕçе тыткăна илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ Буршитейнфуртран пуçласа Кобленца çитиччен тата çав районран хĕвелтухăçнерехре Германи çулĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире, фронтăн центрти секторĕнче, 5-мĕш армин чаçĕсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă, Кастель-Нуоворан çурçĕр-хĕвеланăçнерехре икĕ çуллĕ вырăн йышăннă. Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 9-мĕшĕнче каçхине Берлина «Москито» йышши самолетсем юлашки 18 кун хушшинче çĕрле пыра-пыра тапăннисенчен йышлăрах вăйпа вĕçсе пырса тапăннă.

ЛОНДОН, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 10-мĕшĕнче кăнтăрла Англи авиацийĕ, йышлăн вĕçсе пырса, Германири Шольфен-Бюрти синтетически нефть заводне тапăннă. Мартăн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши самолетсем Берлин çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен Европăра çапăçакан стратегиллĕ авиацийĕн командованийĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: мартăн 11-мĕшĕнче американецсен авиацийĕн 8-мĕш корпусне кĕрекен «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши 1.200 самолет, 750 истребитель ытла хутĕлесе пынипе, Бременри, Гамбургри Кильри подводнăй лодкăсен верфьне тата Бременпа Гамбургри нефть тасатакан заводсене тапăннă.

ЧЕРЧИЛЛЬПЕ ЭЙЗЕНХАУЭР ПĔР-ПĔРИН ПАТНЕ ТЕЛЕГРАММАСЕМ ЯНИ

ЛОНДОН, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх премьер-министр Черчилль мартăн 9-мĕшĕнче союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй главнокомандующийĕ Эйзенхауэр генерал патне телеграмма янă. Çав телеграммăра Черчилль Эйзенхауэра союзниксен çарĕсем пысăк çĕнтерӳ тунипе саламланă. Вăл çĕнтерĕве пула, Рейн шывĕнчен хĕвеланăçнерехре пур нимĕçсене те аркатса пĕтерсе тăкĕç, тенĕ. Америка çарĕсен çак чаплă ĕçĕсене палăртса, Черчилль Англипе Канада армийĕсем çурçĕрте Эйзенхауэрăн çĕнтерӳллĕ шухăшĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тунă ĕçсене савăнса палăртнă.

Черчилле ответлесе, Эйзенхауэр ун патне телеграмма янă. Хăйĕн телеграмминче вăл союзниксен çарĕсем тунă юлашки çĕнтерӳсем пирки хăйне саламланăшăн Черчилле тав тунă.

РУМЫНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ И. В. СТАЛИН ПАТНЕ ЯНА ТЕЛЕГРАММА

БУХАРЕСТ, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни хаçачĕсем паян министрсен совечĕ И. В. Сталин патне янă телеграммăна пичетлесе кăларнă. Телеграммăра çапла каланă:

«СССР Маршалне Иосиф Виссарионович Сталина. Кремль.

Румыни правительстви хăй ĕçе тытăннă чухне Сире, Сирĕн Превосходительство, хĕрӳллĕ салам ярать. Фашизма пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе Совет Союзĕ хăй çине аслă ĕç илнине пĕлсе тăрса, Румыни халăхĕн кăмăлне палăртакан Румыни правительстви фашизма аркатса тăкас ĕçе халех хăйĕн мĕнпур вăйне парса пулăшĕ. Румыни правительстви иртнĕ тискер кунсене яланлăхах пĕтерсе хума, союзниксем умĕнче илнĕ обязательствăсене тĕплĕн пурнăçа кĕртсе пыма тата Хĕвелтухăçĕнчи аслă кӳршипе питĕ таччăн та туслăн çыхăнса тăма çирĕппĕн йышăнчĕ. Çав чыслă обязательствăсене пурнăçа кĕртсе, Румыни правительстви пулас мире организацилес ĕçе хутшăнма май паракан тĕнчери ларутăру пулса тăрассине шанать. Сывă пултăр фашизма хирĕç халăхсем пĕрлешсе кĕрешни! Сывă пултăр ирĕклĕхе кăларакан Хĕрлĕ Çар! Сывă пултăр Совет Союзĕпе Румыни халăхĕсем хушшинчи туслăх!

Министрсен совечĕн председателĕ Петре Гроза».

Çакăнпа пĕрлех Румыни правительстви Рузвельт президент тата Черчилль премьер-министр патне телеграммăсем янă.

РУМЫНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ЛАРАВĔ

БУХАРЕСТ, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Бухарестри радио пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер премьер-министр Петре Гроза председатель пулса ертсе пынипе министрсен совечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Çурçĕр Трансильванире Румыни администрацине туса хурасси пирки Совет правительстви йышăннă решение министрсен совечĕ питĕ савăнса кĕтсе илнĕ, çавăн пирки Сталин Маршала тав тунă. Министрсен совечĕ Румынипе унăн аслă союзникĕ хушшинче çирĕп туслăхăн никĕсне хывнă историллĕ ĕç пирки мартăн 11-мĕшне, 12-мĕшне тата 13-мĕшне уяв кунĕсем тесе шутлама йышăннă. Вăл кунсенче пĕтĕм çĕршыв Çурçĕр Трансильванин тăван çĕршыв çумне пĕрлешнине уявлать.

Министрсен совечĕ саботаж тунăшăн айăплă çынсене наказани парасси çинчен тата çавăн пирки тивĕçлĕ закон кăларасси çинчен решени йышăннă.

АМЕРИКА ХАÇАЧĔСЕМ П. ГРОЗАПА К. ТАТАРЕСКУ И. В. СТАЛИН ПАТНЕ ÇЫРУ ЯРСА УНТАН КАЯЛЛА ÇЫРУ ИЛНИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Америка хаçачĕсем Румынири министрсен совечĕн председателĕ П. Гроза тата министрсен совечĕн вице-председателĕпе ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Г. Татареску СССР Совнаркомĕн Председателĕ И. В. Сталин патне çыру яни çинчен тата И. В. Сталин ответлени çинчен курăнмалли вырăнта пичетлесе пĕлтернĕ.

Çак пĕлтерӳ çинчен «Нью-Йорк таймс» хаçат çапла çырать: Гроза правительстви политикăллă пысăк ăнăçу турĕ. Румыни правительстви Трианонри договор хыççăн ку тарана çитсе те ун пек ăнăçу тăваймаччĕ-ха. Вăл ĕнтĕ Гроза авторитетне румынсем хушшинче ӳстерме, çавăн пекех СССР-па Румыни хушшинчи туслăха çирĕплетме пулăшĕ.

ЮГОСЛАВИН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ДЕКЛАРАЦИЙĔ

БЕЛГРАД, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Мартăн 9-мĕшĕнче каçхине Югослави премьер-министрĕ Иосип Броз-Тито маршал радио тăрăх Югославин çĕнĕ правительствин декларацине вуласа панă.

«Пирĕн тăван çĕршыв,—тенĕ Тито маршал,—пĕрлехи правительство тунăччĕ. Çакă вăл вăрçа ăнăçлăн тата хăвăртрах вĕçлеме тата пирĕн çĕршыва хăвăрт та йĕркеллĕн ура çине тăратма кирлĕ условийĕ пулса тăрать».

«Правительство хăйĕн тĕп задачи çакă пулса тăрать тесе шутлать: тăван çĕршывăн халлĕхе ирĕке кăлараймăн территорийĕн е фашистла оккупантсене хăвăрт хăваласа кăларасси е пĕтерсе тăкасси пулать. Çавă пекех оккупантсемпе тăшманла реакцин влаçĕ айĕнче тăрса хамăр çĕршыва хирĕç кĕрешекен сутăнчăксене тата квислингсене, вĕсене аркатса тăкса пĕтерсе лартасси пулать».

«Правительство,—тенĕ малалла декларацире,—пирĕн нациллĕ çĕрсене тĕнчери пĕрремĕш вăрçă хыççăн пирĕн государствăна кĕреймен çĕрсене, Югослави çумне хутшăнтарма тăрăшĕ. Ют çĕршыв захватчикĕсене хирĕç çак вăрçă вăхăтĕнче восстани туса, вăл çĕрсенчи халăх тĕрĕссипе демократиллĕ федерациллĕ Югославишĕн кĕрешрĕ. Пирĕн халăхсем нацисен самоопределени принципĕ тăрăх кăна мар, вăл çĕршывсенче хăйсем нумай йышлă шутланнипе çеç те мар, хăйсем хĕçпăшал тытса Пĕрлешӳллĕ Нацисен ĕçне пысăк усă панипе те вĕсем çакна тивĕçлĕ пулчĕç.

Пысăк çухатусем тӳссе пирĕн халăхсем нацине демократи тĕлĕшĕнчен тунă пысăк çитĕнӳсем пирĕн правительство ĕçĕн никĕсĕ пулса тăраççĕ. Вăл çитĕнӳсене [illegible] 1944 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнче [illegible] хулинче пулса иртнĕ иккĕмĕш сессийĕн решенийĕсенче палăртса хăварнă.

Югославири пур халăхсем те пĕртан правалла пулнине упраса, правительство вĕсем хушшинчи тăванлăха çирĕплетсе пырĕ. Вăл ĕнтĕ вĕсемшĕн пурнишĕн те мирпе ырă пурнăçăн, телейлĕ пуласлăхăн никĕсĕ пулса тăрĕ. Паянхи кун пирĕн халăхсем хушшинчи çыхăнусене çавăн пек йĕркелени пирĕн государство пĕрлешĕвĕн — демократиллĕ федерациллĕ Югославин — авторитетне тата унăн вăйне нихăçанхинчен те ытларах ӳстерсе ячĕ. Çав вăхăтрах ирĕклĕхшĕн пыракан йывăр кĕрешӳ пĕрлехлĕ Югослави унăн пур халăхĕсемшĕн те питĕ кирлĕ пулнине çĕнĕрен çирĕплетсе пачĕ. Пĕрлехлĕ Югослави ăнсăртран пулнă япала мар, историллĕ кирлĕ япала пулнине, унсăрăн унта пурăнакан халăхсен ирĕкĕ те пулма пултарайманнине вăл лайăх кăтартса пачĕ.

Пирĕн халăх массисем халăх ирĕклĕхĕшĕн пынă вăрçă вăхăтĕнче кĕрешсе илнĕ демократиллĕ правасем, чи малтанах пирĕн халăх влаçĕн структуринче палăрса тăраканскерсем, халĕхи вăрçă условийĕсенче [illegible] таран упранса юлмалла. Ку ĕнтĕ чи малтанах кашни гражданинăн прависене тата унăн ирĕклĕхне, сăмахран, уйрăм çыннăн ирĕклĕхне, тĕн ирĕклĕхне, сăмах ирĕклĕхне, пичет ирĕклĕхне тата пĕрлешӳсен ирĕклĕхне тивет».

Декларацире каланă тăрăх, çĕршывăн экономикăлла пурнăçне хăпартасси тылăн тĕп задачи пулса тăрать.

Малалла декларацире правительствăн ĕç программи çинчен каласа панă.

«Пирĕн халăхсем,—тенĕ декларацире,—хамăрăн союзниксемпе пĕрле татăклăн çĕнтериччен, гитлерла Германи пĕр сăмахсăр парăниччен кĕрешме пулаççĕ. Правительство вăрçă хыççăнхи мире йĕркеленĕ чухне те союзниксемпе туслăн çыхăнса ĕçлĕ».

Республикăри 10-мĕш шахмат турнирĕ

Ултăмĕшпе çиччĕмĕш турсенче тата выляса пĕтереймен партисене вылянă чухне В. Никитин—Меркулова тата Безверхние. А. Никитин—Смирнова тата Коновалова, Журавлев—Коновалова, Безверхний—И. Никитина, И. Никитин—Меркулова, Студенецкий—Афанасьева, Афанасьев—Меркулова тата Смирнова, Смирнов—И. Никитина çĕнтернĕ. Каменецкипе Афанасьевăн тата Каменецкипе И. Никитин партийĕсем никам çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ. Журавлевпа Каменецкий хăйсен партине выляса пĕтереймен.

Çиччĕ тур хыççăн Студенецкин—5,5 очко (6-ран), В. Никитинăн — 5 (6-ран) Афанасьевăн—3,5 (5-рен), А. Никитинăн—3,5 (6-ран), Каменецкин—3 (5-рен) т. ыт. те.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

[illegible] г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—[illegible], заместителĕн — 0—23, секретарĕн — 4—25, парти пурнăç пайĕн 3—37, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31.

НТ 00042

Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000